Ки 87
28998-чув

# тăван кĕтес

## николай Исмуков



Национальная библиотека ЧР
4-028998

Возвратите книги не позже
обозначенного здесь срока

28998-КЧь

Зак. 3675.

С (Чув)
К
И87
Кр

николай Исмуков

# тăван кĕтес

Сăвăсем

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1985

ББК 84. Чув 7
И 85

28998-чув

...ская
Ре... ...ликанская
Б И Б Л ... Е К А
им. ... Горького

ПРОВЕРЕНО
2010 26 СЕН 2011

**Исмуков Н. А.**
И 85 Тăван кĕтес. Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1985.—48 с.

10 п., 1500 экз.

Николай Исмуков сăввисенчи тĕп тема — Тăван çĕр-шыв, тăван халăх, çамрăклăхпа юрату.

ББК 84. Чув 7

И $\frac{4803010200-095}{М 136 (03)-85}$ 85—85

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1985 ç.

# ТӐВАН КӖТЕС

## ÇӖРШЫВӐМ-АННЕ

Умра, тантӑшсемӗр,
Телейлӗ кунçул.
Сулмаклӑн утмашкӑн
Вӑй-халӑм мӗн чул!

Юратнӑ Çӗршывӑм,
Епле эс хитре!
Хаваслӑ кун сӑнӗ
Çиçет сӑн-питре.

Çӗршыв вӑл анне пек
Ялан чӗрере.
Çак икӗ сӑмахӑн
Пӗлтерӗш пӗрре:

Аннесӗр, Çӗршывсӑр
Пулать-и этем?
Вӗсем пулмасан,
Ӳкем эп, пӗтем.

Аннемӗр инкекӗ —
Çӗршывшӑн инкек.
Вӑл маншӑн та йывӑр
Арман чулӗ пек.

Çĕршывăн телейĕ—
Аннешĕн телей.
Хăвна шеллемесĕр
Ăна хӳтĕле.

Тăван амăшне те
Манан çынсене
Епле шанса парăн
Çĕршыв пурнăçне?

Тăван çĕршыва
Юратсассăн кăна
Анне пилĕ çитĕ
Мана та сана.

Çĕршыв-аннене
Халаллатăп сăвва.
Вăл сывă пулсассăн,
Эпир те сывах.

## ИРХИ ӲКЕРЧĔК

Тин кăна тавралăх шăпчĕ,
Çил те çукчĕ тин кăна,—
Шăхăрса та ячĕ шăпчăк,
Йыхăрса килес куна.

Шурăмпуç—пĕветнĕ ençĕк—
Шуралсах ĕлкĕриччен
Сарă кайăк пек çĕкленчĕ
Сар хĕвел сăрт хыçĕнчен.

Юратса пăхса илетĕн:
Сывлăмпа çиçен хирте
Шенкер куçлă симĕс йĕтĕн
Кӳршĕ хĕрĕ пек хитре.

Пăла çумĕн аслă улăх,
Çăкасарĕ çеçкере.
Сан пекки, ман ялăм, урăх
Çук та пулĕ тĕнчере.

Çĕнĕ куп илемĕ анчĕ
Куçкĕски пек çут кӳлле.
Шăпчăк майĕпен шăпланчĕ,
Çил те чарăнчĕ хуллен.

**ВĂРМАН**

Çил тухнă та, каш-каш кашлать
Кĕрхи вăрман манпа калаçнăн.
Пилеш çулçи ташла-ташла
Прачак урлах вĕçсе, ав, kaçнă.

Кашлать вăрман хăй кĕввипе,
Хĕвелпеле тăрри хĕмленнĕ.
Пĕр йăлăхмасăр кунĕпе
Эп сахал мар ăна итленĕ.

Ун кĕввинче сăпка юрри—
Анне сасси — юхать ачашшăн.
Тен, çавăнпа кунта юри
Килсе çӳреттĕм йăпанасшăн.

Çав юрă май куç умĕнчех
Иртсе каятчĕ пĕчĕк тертĕм...
Вăрманăм, чĕрçиттӳ çинче
Эс вылятса мана ӳстертĕн.

Пĕрле тăрса юрлаттăн пек,
Эпир вăййа тухсан, вăрманăм.
Пĕрремĕш хут кунта хĕрпе
Çӳренине ăçтан-ха манăн?

Ир-каҫ юрлатчӗҫ кайӑксем.
Канмастчӗ шӑпчӑкӗ-ӑстаҫӑ.
Хӗвел шевли пек кунӑмсем,
Ыйхӑ килмен каҫсем ӑҫта-ши?

Ҫул ҫӳресе эп тӗнчере
Нумай илемлӗ вырӑн куртӑм,
Анчах упранчӗ чӗрере
Тӑван тавралӑхшӑн ыр туртӑм.

Паян кунта эп. Тӗлпулу!
Чӗрем сиксе тухас пек манӑн.
Эп килтӗм — санӑн ывӑлу,
Эп килтӗм, манӑҫми вӑрманӑм.

Умра хӗрелнӗ вӗрене,
Юратнӑ хӗр пек шурӑ хурӑн...
Ытла та ҫывӑх чӗрене
Ачаранпах сӑваплӑ вырӑн.

Юрла, вӑрманӑм, кашласа.
Сассу сан ирӗклӗ те уҫӑ.
...Хӗвел ҫинче вӑй выляса
Вӗҫет, вӗҫет сап-сарӑ ҫулҫӑ.

## КОМСОМОЛ ПУТЕВКИПЕ ҪӖПЕРЕ КАЙНА ЮЛТАШАМСЕНЕ

Умра ялан халь телевизор.
Килтен тухмастпӑр сӑвӑр пек.
Утам-и пӗр пӑшӑрханмасӑр
Унччен ҫӳренӗ ҫулсемпе.

Ҫитсе курам паян Ҫӗршывӑн
Асран кайми кӗтессине.

Манми туссем хавассăн, сыввăн
Кĕрейччĕр сăвă çеммине.

Каллех сăнам Çĕпĕр каçĕн
Ўпне ўкен çут уйăхне.
Куçран пăхса тăрам сар Азин
Тĕпренчĕк хĕрлĕ чечекне.

Кашни чечек — пĕр кун илемĕ.
Пĕрер-пĕрерĕн вĕсене
Унчченхи пек эп парнелем-и
Ĕçре ĕшеннĕ хĕрсене?

Тĕк татнă пек, поэт каларăш,
Иртейрĕ вăхăт сиккипе.
Çут çăлтăрсем пек сапаларĕ
Пире шăпа Çĕршывĕпех.

Ăçта-ши халь эсир, ман савнă,
Ман кăйкăр куçлă йĕкĕтсем?
Аса килеççĕ-и асамлă
Вăй-халлă çамрăк вăхăтсем?

Пурне те халь сире пухасчĕ
Ĕçкĕре мар — çав стройкăрах.
Кăвайт чĕртсе каллех ларасчĕ
Ал ăшăтма вучах тавра.

Хаваслă кулă пек çиçетчĕç
Пăлхавлă çулăм пĕккисем.
Çав татăк-татăк çулăм пекчĕ
Ун чух вĕри чĕремĕрсем.

Сикетчĕ çиçĕм-сварка çуттăн
Вĕт çăлтăрсем ума сапса.
Хуран тулли вĕретчĕ битум,
Хуллен-хуллен хăмпăланса.

Паталлă алсемпе маттуррăн
Пăралука пăра-пăра
Хăватлă шăнăр-арматура
Хĕрсех çыхаттăмăр вара.

Барак вырăнĕнчи хĕвеллĕ
Сап-сар çуртсемĕр сых ятне
Упраççĕ-ши ĕçчен чĕреллĕ
Чăвашăн тараватлăхне?

Лебедкăпа çĕклем-çĕклемĕн
Бетон хăпартнă çурт çине
Эпир шăратнă та çĕкленĕ
Хальхи ăру çирĕплĕхне.

Ăçта-ши халь эсир, ман савнă,
Ман кăйкăр куçлă йĕкĕтсем?
Аса килеççĕ-и асамлă
Вăй-халлă çамрăк вăхăтсем?..

**ТАВАН ЯЛА КИЛСЕН**

Сакăлталлă çул çине тухатăп.
Пăрăнса кĕреп те сылтăма,
Шлепкене хывса эп саламлатăп
Хам çуралнă кивĕ çуртăма.

Сывă-и, чĕкеç йăви пек пĕчĕк
Килĕм-çуртăм, савнă çуртăм ман?
Манăçман-и ывăлун сăн-пичĕ? —
Эп сана ним чухлĕ те манман.

Асилем тесессĕн, асилмешкĕн
Иртнĕ вăхăт сахал мар умра.
Халь пулас-и ĕлĕкхи пек вĕçкĕн,
Ташласа пăхас-и урамра?

Çӳç вире, тута та чăпăрт хупă,
Костюмран кăларнă шур çуха...
Темшĕн Çĕмĕрткас енче хуткупăс
Урăх кĕвĕпе халь каçăхать.

Урăх вăхăт — урăхла ташлаççĕ,
Ĕлĕкхи пек юрламаççĕ халь.
Ушкăн-ушкăн урама тухмаççĕ,
Чăвашла та ташлакан сахал.

Кĕçĕр каç сасартăк эп ăнлантăм
Çамрăклăх иртсе те кайнине.
Салхулантăм, шăхăрмасăр антăм
Хамăр «Чипер арăм» кассине.

## ЧӲРЕЧЕ ÇИНЧИ ХĔЛ ЭРЕШĔСЕМ

Йăмрасем шап-шурă пас тăкаççĕ,
Кĕмĕл уйăх сарнă çунатне.
Калăн, юмахри Диканька каçĕ
Аннă Аслă Арапуç садне.

Шухăшра кăна вĕçсе çитейĕн
Ĕлĕкхи ытарлă кун умне.
Шур илсе-çке суккăрланнă тейĕн
Хурал пӳрчĕ кантăкĕн куçне.

Темиçе мĕльюн çулхи аваллăх
Лăпсăркка упасарри пулса
Чул çинчи ăста гравюра майлăн
Кĕленче çине ӳкет шурса.

Ак ăçта вăл кивĕ мезолитăн
Сăнĕ-ĕмĕлки шуса иртет.
Иртнĕ вăхăт, чухласа эс илтĕн,
Çапăнса, тен, юлнă вăл пиртех.

Ҫăткăс япалашăн тĕлĕнетĕн,
Савăнан ансатшăн темĕн чул.
Тен, этемлĕх аталанăвне те
Ҫĕскетсе утса эп тухнă пуль?

Авалран кунта ҫитсе ўкме-мĕн
Чăнлăх илнĕ юмахран тумне.
Эй, мĕн чухлĕ вăрттăнлăх тĕнчемĕн —
Тупайса пĕтер-ха тупсăмне.

## САМАНИ ТЕ, ҪĂМĂЛ ТА АВАН

Арапуҫăн ҫĕрĕ хĕсĕр мар
*В. Митта*

Самани те, ҫăмăл та аван.
Мĕншĕн юрлас мар-ха ман, тăван?
Ал сулса пуҫлам-и ҫĕнĕ юрă —
Ҫуркуннесĕр ирĕлтĕр шур юрĕ.

Ушкăнпа тухсассăн акана
Тырă ҫеҫ-и? — туслăх акăнать.
Тус-юлташлă пурăнар, ачсемĕр,—
Тулли пулĕ кĕреке те ĕмĕр.

Авăнса юхать ялтан яла
Сăвăҫсен сăпкийĕ — ҫут Пăла.
Шур хăвалăх — шур хумханчăк тĕрĕ,
Ҫамрăклăх сăвви ҫав пулĕ терĕм.

Арапуҫăн ҫĕрĕ хĕсĕр мар —
Лартнă йывăҫ яратех тымар.
Ав мĕн чухлĕ вăйпитти ҫыравҫă
Ывҫăн-ывҫăн савнăҫне сапаҫҫĕ.

Пăла ен çемçе таса чĕлхи —
Шăнкăр-шăнкăр çăл шывсен юххи.
Пăтратмасăр эп ăна ăсам-и —
Куçтăр кăшт мана та ун асамĕ.

Хĕрлĕ мăкăнь, хĕрлĕ чечексем,
Тек ан ларăр пуçсене пĕксе.
Çĕкленет паян патвар та сывă
Çĕн хунав — ăс-хакăллă хĕр-ывăл.

## ТАВАН КĔТЕС

### 1

Хур шуйхашни те илтĕнмест текех.
Кĕтӳ анса тусан лăпланнă ĕнтĕ.
Хевтесĕр çил вĕçтерейместь тĕке,
Тӳнтерлĕ ларчĕ суккăр вĕлтĕрен те.

Теме сиссе кĕлет кĕтессинче
Кăçса кайсах юрлать пĕр шухă шăрчăк.
Пуплет ыран мĕн тумалли çинчен
Правлени умĕнче пĕр ушкăн карчăк.

Мĕн юлнă урамра? Мĕскер асра?
Теме кĕтсе теме тимлетĕп питĕ:
Çук, илтĕнмест паян çӳлти касра
Саккăрлатса хатарлăн пир çапни те.

Кун вăйĕ майĕпен сӳнсе пĕтсен
Хура куçĕсемпе пăхать те каçĕ,
Çӳл йăмрасем — кĕрнеклĕ йĕкĕтсем —
Çавăтăнса каçхи вăййа тухаççĕ.

Шыва пăрçа ӳкернĕн сас парса,
Çутаяксем пытанмалла выляççĕ.
Хумсем вара, ыталанса пырса,
Хăва çулçисене чăп! чуптăваççĕ.

Хăй евĕр пурăнать каçхи тĕнче.
Ана курма, туйма кăна пĕл эсĕ.
Мир пултăр ăшă чĕрçиттӳ çинче,
Мир пултăр чунунта, тăван кĕтесĕм.

2

Ирсем, ирсем! Саркайăк тĕкĕпе
Шывпа пуçса сире ӳкернĕ пулĕ:
Епле хитре, черченкĕ! Тĕкĕр пек
Ума тухать ик юплĕ Шетмĕ çулĕ.

Чĕкеçĕн йăвинчен тирпейлĕрех
Йăмралăх айĕнчи ман савнă ялăм
Хăна кĕтейнĕ пек кĕтет ире.
Тавсси килекене! Тавсси, вăй-халăм!

Пуç тăрринче чĕвĕлтетсе ларан
Сап-сар хĕвел чĕппи пек сарă кайăк,
Чăвашăн шăпчăкĕ эс пулнăран
Юрру умне пуçа пырса эп тайăп.

Саламлă çыру евĕр кун килет.
Унпа мĕнпур пуласлăх, шанчăк, ĕмĕт.
Илемлĕхе савса юрла, поэт,—
Ир пултăр та кун килтĕр ĕмĕр-ĕмĕр.

Хăй евĕр пурăнать ирхи тĕнче.
Ана курма, туйма кăна пĕл эсĕ.
Мир пултăр ăшă чĕрçиттӳ çинче,
Мана пит таракат тăван кĕтесĕм.

* * *

Çĕр — чăнлăх калăпĕ те, ун виçи те,—
Çапла каланă халăх ĕмĕртен,—
Хура Çĕртен пылакĕ те, йӳççи те,
Çич тĕслĕ чĕр чечек хура Çĕртен.

Сан тупсăмна тупасшăн çĕр çĕрлерĕм,
Эй, Çĕр-анне, эй, пурăнăç чĕрки.
Сан кăкăрна чечексемпе тĕрлерĕ
Асамлă йĕп пек çутă пайăрки.

Илтетĕр-и? — çав чечексем юрлаççĕ
Илемлĕ, çичĕ тĕрлĕ сасăпа...
Хĕвел ятне хăватлă гимн хураççĕ,
Çĕр ячĕпе тăваççĕ, тен, тупа...

Илемлĕхе илемлĕхпе виçер-и,
Чĕрĕлĕхе чĕрĕлĕхпе виçер.
Хĕвелĕмĕр, эс аслăрах-и, Çĕр-и?
Хĕвелĕмĕр, эс хаклăрах е Çĕр?

Ахаль-и çĕр çыртса тупа тăватпăр
Этем чысне юнпа сыхлас чухне?
Ахаль-и Хĕвеле пăхса калатпăр
Салтакăн тӳрĕ, чăнлăх сăмахне?

Ача пек киленсе сĕткен ĕметпĕр
Юратнă Çĕр-анне кăкăрĕнчен,
Хăват илсе çич тĕслĕн ешеретпĕр
Хĕвеллĕ самана ытамĕнче.

Апла епле тав тумăн тараватшăн
Хура Çĕре — ырми аннемĕре,
Апла епле тав тумăн вăй-хăватшăн
Саманана, хĕвеллĕ ĕмĕре —
Атте пек çитĕнтернĕшĕн пире.

## ÇĔР ЮРРИ

### I

Çулçӳрене инçе çула тухмашкăн,
Ай, кирлĕ уçă кăмăл, тӳрĕ чун.
Халтан кайсан вара ларса канмашкăн
Умра ялан çăл шывĕ пултăр ун.

Пурах пуль çав хисепĕ пуç таймалăх,
Пурах çав техĕм илĕртме куçа —
Ахальтен мар Раççейĕпех ман халăх
Пура ярса упранă çăлкуçа.

Вара унта пăрахнă кĕмĕл çĕрĕ,
Сукмак йĕрленĕ улăх таптаса:
Юхса тăрсан кăна çăлкуçĕ чĕрĕ,
Асса тăрсан кăна çăлкуç таса.

Эп вĕсенчен выртса пайтах шыв ĕçрĕм
Çĕршывăм тăрăх çӳресе, туссем.
Утăмăмсем сулмаклă пулччăр терĕм,
Сĕтеклĕ пулччăр терĕм сăмахсем.

Ай, шăнкăрти, ай, шăнкăрти çăлкуçĕ,
Санпа эп калаçам куçран пăхса.
Санран пуçланнă та Пăла — çул пуçĕ
Таçтах çитет-мĕн Атăлпа юхса.

Апла пулсан Пăла — мăн çул пуçламăш,
Çул вĕçĕ те кунтах тухайтăр-и...
Калла хампах килейтĕр чун йăпатмăш
Пире сыхлан пĕтев — чăваш юрри.

Чун савнă çăлкуççем, сире ман парăм:
Тăванăма тăван чĕлхепеле
Юррăрсене епле юрласа парăп,
Епле çаврăрса калăп çак пиле.

## II

Çаран çине пӗрремӗш хут тухайнă
Çинçе уралла çамрăк тихалла,—
Савăнăçне ăçтан кăна пухайнă? —
Çăл шывĕ выляса чупать мала.

Сар ылтăн хĕвеле çĕклем-çĕклемĕн
Хире илсе тухать тĕрте-тĕрте.
Чарусăр каччă пек, вылянăçемĕн
Чечексене чăп чуптуса иртет.

Пырне чӳхет-и шăпчăк? Е вăл манăн
Ачалăхран сас ахрăмĕ килни? —
Шăхлич çине шăрçа ярса юрланăн
Шăнкăртататать вăл ыванма пĕлми.

Тен, пурнăç хăй çапла тапать чул айĕн
Вылявлă ирĕк тĕнчене илме?
Кунта, ак, кĕçенсе анать çул майăн
Юпах Пегас таса сив шыв ĕçме.

Тата хитре танлаштару шырар-и?
Вулакана тек астарар юри...
Çăл сассипе тасаланса янрарĕ
Çак аслă Çĕрĕн пĕчĕкçĕ юрри.

Эй, пĕчĕк юрă! Сан умна куклентĕм
Кив тĕн çынни пек, çĕклесе алла.
Мĕне тытса мĕнпе чӳк парăп ĕнтĕ
Эс ĕмĕр янрассишĕн çаплалла.

## III

Эй, чĕрĕлĕх юрри! Чунра уçатăп
Хальччен туйман шалти хăватăма.

Эп вăхăт алăкне уçса пăхатăп
Чăн-чăн Пуçламăш умĕнче тăма.

Çак аслă самантра — пуçламăш, эпĕ
Пĕр юрăра, пĕр пĕчĕк тĕвĕре.
Пĕрремĕш утăм тăвассишĕн тепĕр
Шырав, тен, хускалать-и тĕнчере...

Картса хумасть çулне çак çутçанталăк.
Çапах парас килет ăна та чун.
Хăйне пăхăнтармалăх, çул тытмалăх
Тен, урăх саккунсем те пулнă ун?

Тен, урăх çул та урăх сисĕм пулнă
Çак хускану, çак чĕрĕлĕх тенин?
Анчах аталану саккунĕ хывнă
Çул-йĕр — ялан мала кăна чĕнни.

Малах утатпăр чăрсăррăн та çирĕп,
Пĕрле чĕнетпĕр ыр чунлисене.
Куратăп-и, малта шырать çăл ирĕк,
Вăл çĕнтерет мĕнпур чăрмавсене.

Эй, пăхăнманлăх, çул уçан пулсан та,
Пĕр саншăнах эп хура-шур тӳссе,
Сăмах илтсе мĕн чухлĕ асаплантăм,
Мĕн чул тата çухалчĕç пуль туссем.

IV

Эп, пуçтахскер, çапах та пуç усмарăм:
Çăл шывĕ пек тасан янрам тесе
Çич ютсене çывăхăма ямарăм,
Мухтавшăн та каймарăм йӳтесе.

Инкек те пулчĕ — инкекле юлмарăм,
Ултав та тӳсрĕм — çынсене вăлтман.
Ырăлăха ырăлăхпа ман парăм,
Усалсене те пур-ха парăм ман.

Тен, урăхла та пурăнма май пулнă?
Пĕрремĕш утăм та, тен, тĕрĕс мар?
Шырав тени кая юлса хускалнă,
Тĕллевĕ тĕвĕленнĕ, тен, сыв мар...

Халь тин мĕн пулнине ӳпкелеместĕп,
Иртен куна кам тавăрайĕ, кам?
Е çĕнĕрен çул суйласа илес-тĕк,
Эп пăхăнманлăх çулĕпех утам.

Йĕрки çапла: çухалмалли çухалтăр.
Аталану саккунĕпе малта
Мĕн чухлĕ тупмалли çап-çутă çăлтăр,
Мĕн чухлĕ тупмалли туссем тата!

Эй, чĕрĕлĕх юрри — этем телейĕ,
Сăмах хускатрăм эп сан кĕввӳ май.
Пĕр сыпкăм сив шывна эп ĕçрĕм тейĕн—
Чун уçăлчĕ, калаçмалли нумай.

### АТТЕНЕ

Хĕрсем утă çулнă чечен улăхра,
Хитре кайăксем савăк юрă юрланă.
Хĕвел йăл-йăл кулнă сенкер уçлăхра,
Тавралăх туллин, уççăн-уççăн сывланă.

Анчах пĕринче, вăрçă-тухнă тесе,
Хăрушă хыпар саралать хир-хир урла.
Мана эс, атте, сăпкаран çĕклесе
Чуптунă та тухнă вăрçа тарăхуллăн.


28998-чв …нская … Горького

Хĕрсем утă çулнă салху улăхра,
Хитре кайăксем хурланса юр юрланă.
Хĕвел тĕксĕмленнĕ синкер уçлăхра,
Çĕршывăм аманнă салтак пек сывланă.

Пуç хунă çынсем çапăçу хирĕнче.
Атте, эс унтан каялла таврăнмарăн.
Ларатпăр анне чĕркуççийĕ çинче
Ик тăлăх, чĕкеç чĕпписем пек, мăнтарăн.

Мана тек курман эс, йĕрсен—йăпатман,
Пылак çитермен, сиктермен сăпкара та.
Кунсем иртнĕçем сарăхса пыракан
Салтак çырăвне эп пĕтев пек упратăп.

Çут шуçăм килсен çирĕмри куçсенче
Сӳнейрĕ пуль çăлтăр—çунатлă çут ĕмĕт.
...Ман паттăр атте, манăн ĕçĕмсенче,
Ман ĕмĕтсенче пурăнатăн эс ĕмĕр.

## ПУТЕНЕ

Қаçалăк тухас чух юлашки ывăç-
па путене тытăнать, теççĕ. Қам çав
путенене тытать, вăл телейлĕ пулать.

*Халăх сăмахĕ*

Хĕвел те тухман-ха Хырай хыçĕнчен,
Саркайăк анчах сас парать хушăран.
Ыраш пуссипе сивĕ сывлăм çинче
Пыратпăр эпир васкаса çаруран.

Қашнийĕн пуçне виçĕ утăм виçсе,
Анне чик сукмакĕ тухать таптаса.
Вара, сарă тăм кăкшăмран шыв ĕçсе,
Қаçалăк пуçлать, пучаха чуптуса.

Эпир, шкул çулне те çитмен ачасем,
Ĕçе хăнăхса ӳснĕ мĕн пĕчĕкрен:
Қашни ывăçпа малалла куçнăçем
Вырма тăрăшатпăр тасан та тĕпрен.

Выртаççĕ куçа илĕртсе вĕççĕрех
Майра кӳлепи пек ыраш кĕлтисем.
Ӳксе пуççапмалăх пурах çав Çĕре —
Қăçал пушă пулмĕç ампар-кĕлетсем.

Қаçпа та ирпе тĕрлĕрен кăмăлпа
Ыраш пуссипе эп мĕн чухлĕ утман?
Пиçен хупласа илнĕ кив хăмăлпа
Мĕн чухлĕ тата урана амантман?

Хĕвел тахçанах аннă Шетмĕ енне.
Қаç сулхăнĕнче кăшт ĕçлер-ха тесе,
Хăй ывăннине палăртмасăр анне
Пиреваскатать илĕртсе, хистесе:

«Паян тумасан паянхи кун ĕçне,
Усал тĕлĕксем курăн эсĕ ирччен.
Тухасчĕ паян çак каçалăк вĕçне
Çурла тӳртĕшсем курăнми пуличчен.

Пĕлтик путене сар телей, тет, иккен,
Ик ывăçупа, ыльăм, тыт эс ăна».
Вара вылятап аллăма килекен
Ятран илсе панă çап-çут çурлана.

Қаçалăк вĕçленчĕ. Ăçта путени?
Ăçта вăл, ăçта мана пӳрнĕ телей?
Ялан ĕç кăна-и килет ман тĕле,
Е тĕрĕс те мар халăх тĕрĕс тени?

Е эпĕ вĕçертрĕм ăна, е вăл çук?..
Анне, шахвăртса: «Тепринче тытăн»,—тет
Çапах та каçпа килелле кайнă чух
Каçалăк пĕтнишĕн ман чун хĕпĕртет.

Эй, пурнăç анийĕ, эпир халиччен
Мĕн чухлĕ вырман сан сап-сар тырруна!
Телейĕ вара пĕр каçалăкĕнчен
Куçать теприне, йыхăрать ырана.

Çапла пулмалла, тен, çак пурнăç йĕрки?
— Çапла,— евитлет ăна сăвă йĕрки.

# ÇĔНĔ КУН

## ÇĔНĔ КУН

Хĕвеллĕ çĕнĕ кун, салам сана!
Эс вăхăт шутĕнче чи кĕçĕнни.
Чӳречене яр-уçă уçсанах
Пĕлес килет: мĕн парнелен çĕнни?

Пулаççĕ-и санпа унчченхилле
Утас çулсем тап-такăрах çатма?
Е килĕç иртнĕ йăнăшсем каллех
Утас çулта сулăнкăна çапма?

Эп çĕн куна кĕретĕп иртнипе:
Хĕнпе хĕрсе çирĕпленен ăспа,
Çунса тасалнă сарă савнăçпа,
Тӳсĕмпеле, çукран пур тунипе.

Анчах пулассипе пурнап паян:
Çĕн çитĕнӳшĕн пултăр утăм ман,
Хавхалануллăн юхтăр юррăм ман,
Мал ĕмĕтпе ман пурнăçăм пуян.

## ПĔРРЕМĔШ ЛĔПĔШ

Çурхи хаваслă шăв-шавра
Йăмра хайларĕ çĕнĕ юрă.
Çул хĕрринчи юханшывра
Хĕвел çап-çутă тĕрĕ турĕ.

Çур хăнисем хавасланса
Вĕçсе килеççĕ ушкăн-ушкăн.
Ҫарта çинче хавхаланса
Çырать, ав, сăвă пĕчĕк Пушкин.

Пăт-пат çĕр тухнă урамра
Пĕрремĕш лĕпĕш вĕлтĕртетрĕ.
Чĕрем кăлт турĕ те — умра
Ачалăх çаруран вĕлтлетрĕ.

## ХУРАТНĂ КĔМĔЛ

Юнашарах иккен тĕнчен
Хĕвел кулли те хĕл куççулĕ...
Ăçтаваскать юр айĕнчен
Хуратнă кĕмĕл пек шыв çулĕ?

Пуласлăх ăнтăлать мала
Мăн улăхри юпах тиха пек.
Çамрăклатан шанчăкпала
Çурхи куна чупса тухап эп.

Çӳрет пек умăмрах вĕçсе
Хавхалану — хама виçеллĕ.
Тавах. Анаççĕ-ха ĕçсем,
Паян ак сывлăх та йĕркеллĕ.

Тата мĕн кирлĕ тĕнчерен? —
Сăлтавĕ пур-мĕн савăнмалăх.
Анчах мĕскершĕн каçсерен
Чуна шăнтать çурхи çанталăк?„

## ÇУЛÇӲРЕНСЕМ

Кивçен илсессĕн, памаллах, пĕлетпĕр.
Килтен кайсан, килех-мĕн килмелле.
Çулçӳренсем, çак тĕнчене килетпĕр
Телей те ырлăх шырама элле?

Телей тени... Эй, ватăсем, тархасшăн,
Каçарăр та, калаймăр вăл мĕнне.
Ача, те ăнкарсах, куçпа курасшăн
Кайăкне мар — ун савăк çеммине.

Пуçлатпăр пурăнма ансат та ассăр,
Вĕçне тухатпăр ăс пухса çитсен.
Кам пурнăçĕ пĕр шухăша каймасăр,
Пĕр шутламасăр иртнĕ халиччен?

Лавккасене укçасăр кĕнĕ евĕр,
Талантсăрах кĕретпĕр тĕнчене.
Хăçан татса пĕтерĕпĕр? — Çак ĕмĕр
Пире мĕн чухлĕ кĕртнĕ кивçене?

Этемĕн ун нихçан та кăмăл тулмĕ:
Ик ĕмĕр пурнасла илет, тиркет.
Тав куркине алран ярасшăн пулмĕ,
Анчах çул куркине ĕçмех лекет.

Мĕскер яланлăх тĕнчере, мĕн капăр,
Мĕн ĕмĕр кивелми юлать ларса?
Çулçӳренсем, киле ак таврăнатпăр
Калла çулта та савнăç шыраса.

Пиртен килмест тĕнче йĕркийĕ-карчĕ,
Каяс чухне мĕскер-ши хăварам?
Усалсене усаллăх парас марччĕ —
Çынна телей хăй шырĕччĕ вара.

Пĕлетĕп эп, салхулăха сивлеççĕ,
Савăнăçа саваççĕ ĕмĕртен.
Анчах та чăнлăха чунпах сисеççĕ.
Туссем, туссем! Кăшт шутласа илсен,
Çак сăвăшăн мана каçарăр, тен...

## ВОКЗАЛТА

Килеççĕ те каяççĕ — вокзалта
Ларса юлмасть ĕмĕрлĕхех никам та.
Ватти-вĕтти, хĕрарăмĕ, салтак...
Пуриншĕн те вăл тарават та янтă.

Сăнассăм килмесен те куç курать.
Пĕри ялан паврӑть, теприйĕ чĕмсĕр.
Пĕри ытла та канăçлă — çыврать,
Тепри кумать лара-тăра пĕлмесĕр.

Кам маларах каять, кам — каярах.
Кама мĕнле шăпаллă расписани.
Кам ларса çӳрĕ чаплă вакунра,
Кам ытларах пуçтарĕ çул тусанĕ.

Пĕлетпĕр: пурте, пурте çул çинче.
Шлагбаум антарман-ха,— пырăр, иртĕр.
Вокзал пек туйăнать çак çут тĕнче.—
Кĕретпĕр те тухатпăр çех ун витĕр.

## ÇĂВА ТУХНИ

Урпа акма та вăхăт çитрĕ ахăр:
Кӳпчекленсех пырать çырма-çатра,
Араб саспаллисем пек кукăр-макăр
Йĕрсем хăварнă ăмансем садра.

Таçта йăвашшăн аслати кĕрлерĕ...
Ачалăха аса илсе пĕрре
Выртса йăваланар-и, вĕçтерер-и
Çул иртнĕçем чĕрре кĕрен чире.

Çăва тухса та кайрăмăр — сисмерĕм.
Пульницăран тин тухнă пек киле —
Ан тив, сар чечекпе ешертĕр эрĕм —
Пурне те лăпкăн ачашлас килет.

Иртейнĕ асапсемшĕн халь — телейĕ.
Тĕнче анчах тĕк тăтăр, ерипе.
Такмакласа сăвай çапатпăр тейĕн,
Ĕçлес килет çак пурнăç юррипе.

Çынна тĕлĕнтермелĕх çук хăватăм,
Ķайса ўкмелĕх ĕç те тăвайман.
Унта-и пурнăç тупсăмĕ? Ав, ватă
Ķартиш шăлать, çĕре йĕрлет ăман.

Çерçи вăл шăпчăк мар, такам та чухлĕ,
Анчах та чухăн унсăрăн тĕнче.
Ķама мĕн чухлĕ панă, çавăн чухлĕ
Сумпа ларар кунçул кĕрекинче.

Мĕскершĕн кĕвĕçес? Ķалам сăнарлăн:
Никам та çырмĕ ман сăввăмсене.
Апла пулсан, кам тăхăнĕ ман тарлă,
Ман пĕчĕкçеççĕ лавр кăшăлне?

Виçесĕр тĕнчере пур япалан та
Хăй вырăнĕ, хăй вăхăчĕ иккен.
Çерем çинче выртса эп йăвалантăм:
Сыв пултăр хăй хакне ĕненекен,
Хăй вырăнне тўре пек пĕлекен.

## КĔРХИ ШУХĂШ

Кăшкăрашса чупаç-и класĕпех
Шкултан тухсан вĕт-шакăр ачасем? —
Автобус хыççăн сивĕ шоссепе
Кĕпĕрленсе вĕçеççĕ çулçăсем.

Кĕр кунĕ — алăк умĕ, çу — тĕпел,
Эпир унта хăна-вĕрле кăна.
Пĕр чăмăркка сар çу пек сар хĕвел
Текех ӳкмест çавра уçланкăна.

Хуралçă пӳрчĕн мăрйине лексе
Упаленеççĕ ватă пĕлĕтсем.
Пус çекĕлĕ пек кĕтесле вĕçсе
Хуркайăк ăсанать, чуна йĕртсе.

Эй, хĕрупраç! Аллăрсене сулсах
Курăнмиччен ăсатăр вĕсене,
Хĕлле вара каç-каç вăхăт тупса
Саппун çине ӳкерĕр вĕçевне.

Кунсем кĕскелнĕçем хуллен-хуллен
Вăрăмланса пыраççĕ шухăшсем.
Вак-тĕвек ĕç тăватпăр-çке куллен,
Тен, çавăнпа çукрах ятăмăрсем...

Кам çыхнă хура тутăр çу каçа? —
Каççем çинчен сирсе сирмелле мар.
Ай-хай, иртет-çке вăхăт васкаса,
Çурхи шыв пек тытса чармалла мар.

Автобус иртрĕ, çулçă хускалмасть.
Юр ларĕ чӗ малтан çул хĕрринче.
Калас сăмах пек канăç тупаймасть
Хуралнă çулçă хурăн тăрринче...

## ЮМАН ВУТТИ

Юман вутти çунать кӑмакара.
Епле вӑл хӗрхенмест хӑй хӗрӳне.
Куçра выляв, ыр канлӗх шӑмшакра.
Тата мӗн кирлӗ-ха çулçӳрене?

Кӑвак та симӗс, хӗрлӗ, сар тӗссем
Пире парать халь авалхи юман —
Çут тӗнчере нумай çулсем ӳссе
Тӗнче тӗсне илмесӗр вӑл юлман.

Тавлашнӑ вӑл шур юрлӑ тӑманпа
Кӗрешӳре тухасшӑн çиеле —
Сар çулӑм пӗккисем, тен, çавӑнпа
Пӑлхавлӑн хӑпараççӗ çӳлелле.

Уяр кунсем-и тӑнӑ çунтарса?
Е муритленӗ-и йӗпе-сапа —
Пӗр витӗр хӗрелсе, пӗр хуралса
Юман вутти кӑвар шевле сапать.

Ларатӑп шухӑшра вут умӗнче:
Пирте мӗскер сыхланӗ иртнинчен?
Атте-анне йӑли-йӗркисенчен
Юлайӗ-ши чӑвашлӑх чунсенче?

Йӑлтах калла эп парӑп илнине —
Пӗр çын пулсан та туйтӑр ӑшшине.
Анчах хам пурӑннин хакне татни
Пурӑнни мар — кивçен илсе пани.

Сахал илсен те памалла нумай.
Çапла анчах тӗнче утать мала.
Тавах, юман. Кунта эп çула май —
Кӑшт ӑшӑнсан, каллех ман утмалла.

## ТАВАТШАР ЙĔРКЕН

* * *

Çур килчĕ те кĕркуннепе каять
Кикак хуркайăк — тунсăхăн янравĕ.
Усал-и, ырă-и — пĕр илнĕ ят
Кирлех-и, çук-и — ĕмĕрлĕх санра вăл.

* * *

Хăв ĕçлесе илмен япалапа
Каппайланни — тен, иртекен ухмахлăх.
Чăнах хитре сăну-сăпатупа
Эс мухтанни — ухмахлăху яланлăх.

* * *

Ай, курăймаç хăшсем çӳлте вĕçсен,
Ӳксен вара — тĕсси паха тееççĕ.
Кăшт шутласа пăхасчĕ хăть вĕсен:
Çĕрте выртакансем кăна ӳкмеççĕ.

* * *

Пурнасшăн пуль пин ĕмĕр хăшĕсем:
Хыткукарла япаласем пухаççĕ.
Паян-ыран вилес пек теприсем —
Мĕн пуррине тăккаласах тăраççĕ.

* * *

Çын лайăха кăна пăхать пĕрмай,
Начаррине йышăнтараймăн, кăлăх.
Ав, çĕнтерӳн те ашшĕсем нумай,
Çухатусем вара ытла та тăлăх.

* * *

Ырăлăхсем усалсене çĕнсен
Тĕнче таса пулать тесе калаççĕ.
Мĕскершĕн ир каяççĕ ыр çынсем?
Усаллисем усал тума юлаççĕ.

* * *

Икке пайлать пурне те шухăш ман:
Ами пулсассăн, пулмалла ун арĕ.
Туссем пур чух тупăнатех тăшман,
Тăшман пулсан... тус пулмасса пултарĕ.

* * *

«Çынна эс ыр тумашкăн ан васка,
Усал тума кăна ан тăрăш»,— теççĕ.
Хăшсем, чăнах та, çак выртан каскан—
Усал тумаççĕ, ырă та кӳмеççĕ.

* * *

Кирлех те мар пек япала пур чух —
Ăна тытатпăр хывăх пек тăкаклă.
Çука, ав, чĕпĕтсе илме те çук.
Сахал чухне вăл япала пит хаклă.

* * *

Хăй тĕллĕнех ӳсет усал-тĕсел.
Ырра ача пек çĕклесе çӳретпĕр,
Тĕрĕс-тĕкеллĕн ӳстĕр-ха тесе,
Ал-урине те çирĕп пиелетпĕр...

* * *

Ыр сăмахпа ӳссех пырать вăй-хал,
Усаллипе — çур сăмахпах амантăм.

Çĕр пин тус пултăр, пурпĕрех сахал,
Анчах та ытлашши-çке пĕр тăшман та.

* * *

Мĕн çăмăл тĕнчере, мĕскер ансат? —
Евит парать пурне те пурнăç хăй вăл:
Çын йăнăшне асăрхама ансат,
Çынна канаш пама питех те çăмăл.

* * *

Епле çиет ахах пĕрчи куçа,
Пулсан та хăй пĕр чĕптĕм, пĕчĕкçеççĕ.
Çул шучĕпе хаклан-и пурнăçа? —
Ана мĕнле пурăннипе виçеççĕ.

## КĔВĔÇСЕ МАР КАЛАТĂП

Хапсăнса мар, кĕвĕçсе мар калатăп:
Хăшпĕр çынсен утас çул-йĕрĕсем
Тӳп-тӳрĕ те тумхахсăр. Тăвалла та
Çил юхăмне кĕрсе утаç вĕсем.

Кирлех-ши вăй хума? — кĕтсе тăраççĕ:
Телей хăех шăл çĕмĕрсе кĕрет...
Чечексене те çул май çех татаççĕ,
Яланлăх вырăн та — кĕрекере.

Телей лашисемпе чупаççĕ тейĕн
Çак пурнăçăн хитре катаччине.
Çул айккинчен эп пăрăнса иртейĕп —
Кансĕрлес мар вĕсен савăнăçне.

Кашнийĕн хăйĕн çăлтăрĕ, пĕлетĕп.
Анчах пĕр Çĕр çинчех-çке çыннисем.
Эп пур — кашни çитĕнĕве илетĕп
Салтак пек аманса, ӳксе, çĕнсе.

Кучченеç пек сайра телейĕм питĕ.
Анчах вăл пурнăç хаклăш, шутласан.
Телейлисем хăйсен телейĕпе те
Ман телее илеймĕç нихăçан.

## САНА ЕПЛЕ ЭП ТИВĔÇЛĔ ПУЛАМ?

Эп, юратса курман пек халиччен,
Хăçантанпа тутун чечекĕнчен
Шерпетлĕ сыпкăм юрату ĕçетĕп.
Çапах тăранасса пĕлместĕп эпĕ.
Ан калăрсам пĕлмест тесе пиле —
Каллех çĕнĕ чечек тупас килет.

Чееленсе пурнас йăла-мĕн çук,
Шутлатăп ачапча пек тепĕр чух:
Эп юратсан, юратмалла пек эс те...
Анчах юратнине те ĕненместĕп.
Юратăвăм, эс ĕмĕр манпала,
Сана епле эп тивĕçлĕ пулам.

Эй, пурăнăç, эс аслă юрату,
Тату пулсан тата хитре яту.
Кашни куна пĕрремĕш хут куратăп,
Кашни куна юлашки хут пурнатăп.
Ан калăрсам пĕлмест тесе пиле —
Кашни куна çапла пурнас килет.

Улталани тесе ан шутлăрах —
Çĕн куп татах та лайăхрах.
Мĕн тăвăн, тусăм? — юрату вăл суккăр,
Ăна пăхăнтарма меслет те çук-тăр.
Мана эс, пурнăç, тивĕçлĕ пулсан,
Ан кăларсам вĕри ытамунтан.

**САРТ ÇИНЧЕ**

Вăй-халлă сисĕм пур-ха халлĕхе.
Çак сăрт — çар пуçĕн вырăнĕ, туятăп:
Йĕритавралăхри илемлĕхе
Куçпа эп çавăрса тытса тăратăп.

Апла эп çĕнтерӳçĕ паянтан,
Апла Парнас çинче эп — савăк сăвăç.
Çĕнтерӳçе хĕç витмĕ нихăçан,
Поэт ĕçне яланлăх сума сăвĕç.

Эй, чăнлăхăм,ултав алăкĕнчен
Кĕрсе тухап та урăхла килетĕп:
Çак кăшăл пек хитрелĕх ункинчен
Тухаймăп хăтăлса эп ниепле те.

Апла çав çĕптерӳçĕ тыткăнра,
Апла эп читлĕхе вĕреннĕ кайăк?—
Турилкке пек çавра уçланкăран
Пуянлăха епле илсе тухайăп?

Эй, тусăмсем! Пурнас чух савăнса
Кулянмалли те тупăнать арçыншăн:
Тăратăп халсăр князь пек шутласа —
Хитрелĕхĕн хуçи-ши эп, тарçи-ши?..

* * *

1

Пӗр пӗчӗк телее уяв тăвам-и:
Вӗр-çӗнӗ шур кӗпе эп тăхăнам.
Васка-васка çырам йыхрав саламӗ,
Юрла-юрла çавра сӗтел лартам.

Пӗр пӗчӗк телее уяв тăвам-и:
Тус-йышăм килтӗр, ыр сунан тăван.
Сăйлантăр савăнса туссен тăванӗ,
Иртен-çӳренсене хăна тăвам.

Пӗр пӗчӗк телее уяв тăвам-и:
Чӗл-чӗл пайланă пек сар çăкăра
Пуриншӗн те пӗрер кăмăл турамӗ
Унран тухайтăр кăмăла кура.

Микротӗнче йӗрки-ши чун-чӗремӗн? —
Саккунӗсем ун урăхла пачах:
Телейӗме çыппа пайланăçемӗн
Пӗчӗкленмест вăл — ӳсӗнет анчах.

2

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Шур кӗпе мар, хура сăхман уртам.
Пӗччен чухне сывлам эп ассăн-ассăн,
Ялйышăмпа пӗрле пӳрт хăпартам.

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Юратнă ӗç ан ӳктӗр алăран.
Аш вăркасан та лăпкă пултăр сассăм,
Юрлас тени ан тухтăр йăларан.

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Шăла çыртса чăтам-тӳсем ăна.
Тус-тăвансем вара, килес пулсассăн,
Чĕнмесĕр килччĕр — хаклă çав кăна.

Чун хушшинче йăл илнĕ чун-чĕремĕн
Саккунĕсем урăхла мар иккен.
Çынпа чуна уçса калаçнăçемĕн
Ман хуйхăм та иртсе пырать майпен.

* * *

Кунсем те каçсем шутласа
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтерейменĕн пĕрех савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çĕмĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем, çырлисем
мĕншĕн йĕпкĕн хура?

Тĕнчемĕр — улшуç.
Ылмашаççĕ çут тухăç, сив анăç.
Кам пулĕ тӳре? Улшăну саккунне пăхăнса
Паян тивĕçпе килмелле пек
шур çĕмĕртлĕ савнăç,
Анчах хура хуйăх хурах пек тухать шăвăнса.

Шап-шур çеçкерен
шурă-шурă çырла, ай, пулмарĕ.
Епле, тутансан, вăл чĕлхе-çăвара типĕтет.
Эй, хуйăх,
эс сивĕннĕ савăнăç пулăмĕ мар-и?—
Сана астивсен, чун-чĕре хуралса пиçĕхет.
Хура çĕмĕртрен
шур саппунлă çеçке тухса ларĕ.

Çак мар-ши улшуçăн тĕллевĕ тесе сĕмленен.
Эй, савăнăç,
эс хура хуйăхăн мăшăрĕ мар-и —
Чĕре суранне,
арăм пек, хăвшăнах, тен, сиплен.

Телей те инкек хушшинче
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтерейменĕн пĕрех савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çĕмĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем, çырлисем
мĕншĕн йĕпкĕн хура?

# ЧĔРĔ ТĔВĔСЕМ

## САРĂ КАЙĂК ТĔКĔ...

Тайăлса ӳсет ҫӳл сăрт ҫинче
Пĕр тĕпренчĕк шăрчануй чечек.
Сăнасан, кунти вырăнсенче
Ĕмĕрсен мĕлкийĕ шунă пек.

Чăрăшсем тăратчĕҫ хуралта
Ĕлĕкхи чăваш чаппанĕпе.
Эп вара ҫап-ҫутă Ҫавалта
Хур пăхаттăм кунĕ-кунĕпе.

Сакăлталлă ҫул ик айккипе
Сарă кайăк тĕкĕ — сар чечек.
Сар ачалăх иртрĕ сиккипе,
Ҫак тавралăх ҫаплипех чечен.

* * *

Ҫыран ҫине сике-сике
Хумсем алхасрĕҫ айăн-ҫийĕн.
Вăхăтсăрах ҫĕре ӳкет
Куҫҫуль пек панулми ҫеҫкийĕ.

Ҫил тухнă. Путсĕр, шухă ҫил...
Инкек ҫапла ҫапсассăн вирлĕн
Ҫумра эс кирлĕ, ҫывăх ҫын.
Сан ăшă сăмаху пит кирлĕ.

## КАЛЛЕХ ЭП САН...

Ҫаллех эп сан ытамунта,
Ҫивелнĕ садăм, савнă садăм.
Телейлĕ пулнă вырăнта
Ҫаллех эп шухăшлăн сывлатăп.

Ун чух сар ҫӳҫĕме тивсе
Май ҫилĕ выляса иртетчĕ,
Улмуҫҫисен тураттисем
Шап-шур сулмаклă чечекреччĕ.

Ҫĕмрен пекехчĕ ĕмĕтсем,
Таса та ҫылăхсăрччĕ ятăм.
Пĕр юрă ҫаврăмне кĕтсе
Теприн ҫинчен манса каяттăм.

Сире-сире ҫав кунсене
Нумай-и ылтăн вăхăт иртрĕ?
Паян хăшпĕр ĕмĕтсене —
Вĕҫмен хăлат чĕпписене —
Ҫунтах тупса пӳспе эп витрĕм.

## ҪĔРЕКЕ МАР — КИРЛĔ ҪĔТЕҪЕН

Пит пуян та сирĕн ҫĕреке,
Ҫăмăлăрсем апла мар иккен.
Тăхăнам та кивĕ ҫĕрĕке
Уттарам-и килелле майпен.

Хапсăнмастăп пурлăха, чапа,
Ҫĕреке ан тăкăнтăр тулса.
Алăри ҫеҫке пек ачапа
Арăм алăк уҫтăр йăл кулса.

Пĕтĕм савнăç тухрĕ ман тĕле.
Урăх ним те кирлĕ мар иккен.
Пурнăçра тупмашкăн чăн телей
Кĕреке мар — кирлĕ кĕтекен.

## ПАРНЕ ПАМАÇÇĔ ПУРĂННИШĔН

Парне памаççĕ пурăннишĕн.
Чун еккипе килмест кунçул.
Пĕр пĕчĕк лаптăк тыр анишĕн
Тăрмашрăм эпĕ темĕн чул.

Пĕлетĕп, ваттисен халапĕ
Юнашарах мĕн чăннипе...
Мĕн тунипе çырлахмалла пек,
Лăпланмалла пек пулнипе.

Анчах умра вырман каçалăк,
Куç виçеймест сар тыррине.
Инçех те мар кĕрхи çанталăк,
Пухса кĕртес мĕн пуррине.

* * *

Те мансах пыратăн эс те,
Савнă çыннăм, савнине:
Лĕпĕш пек вĕçсе килместĕн
Манăн чӳрече умне.

Тĕмсĕлсе аса илместĕн
Эс мана, тен, урăхран.
Чечексем пухса кĕместĕн
Ман пата эс улăхран.

Унчченхи пек, йăпанасшăн
Ытлашши салху чухне,
Пĕчĕк кайăк пек ачашшăн
Ӳкес çук чĕркем çине...

**ПУЛЬНИЦАРА**

Тем анлăш палата та тăвăр.
Кунсем те, каçсем те пĕр пек.
Паян эс çырайăн-и сăвă
Çаплах, унчченхи хĕрӳпех?

Асать, хумханать чĕрĕ тунсăх—
Йĕпеннĕ хура вĕлтĕрен.
Çунатăм ман ывăннă, усăк,
Те лăпкăн вĕçме пĕлменрен?..

Çапла, пуррине упраймастпăр,
Йĕретпĕр вара çухатсан.
Ăçта-ши хĕвеллĕ те капăр
Çӳхе парне тутăрĕ сан?

Епле çăмăл пулĕччĕ, ырă
Ялан эс пулсассăн çумра.
Манра эс çуратнă пĕр юрă,
Пĕр юрă — пĕр ĕмĕт умра:

Каллех ĕлĕкхи пек пырасчĕ,
Санпа алла-аллăн тытса.
Текех чирлес марччĕ—утасчĕ
Пĕр тикĕс, пуçа ывăтса.

Тăрам-и апла эп, утам-и
Çӳхе кĕпе вĕççĕн кăна.
Тăван пек, мăн улăх ытамĕ
Савса ачашлатăр мана.

Сипетлĕ чечекĕн шăршийĕ,
Сывлам ăна кăкăр тулли.
Ирхи таса сывлăм шевлийĕ,—
Тен, ман савнă çынпăн кулли...

## УЯВ ИРТЕТ ТЕ...

Паян телейлĕ эсĕ çав тĕрлех:
Сан ятупа ĕçет хăна-вĕрле.
Кĕрекӳне мухта-мухта юрлаççĕ,
Кайран вара... хăвна мансах ташлаççĕ.

Телей яланлăх килнĕн савăнан,
Тус-юлташу çинчен пачах манан.
Хуйха-суйха эс уйăрма пĕлетĕн,
Анчах пайламалла-мĕн телее те.

Уяв иртет те пушанать сĕтел,
Пĕччен юлсассăн, савăк мар тĕпел.
Ултав, паллах, малтан илемлĕ ĕнтĕ —
Эп тĕрĕсне каларăм та — çиллентĕн.

* * *

Ах, ыйхă вĕçрĕ ман. Çутăласса кĕтсе
Çĕн ĕмĕт çуралинччĕ, иçмасса.
Пурнăçланман хĕвеллĕ ĕмĕтсем
Çунтарчĕç ăшăма сĕм каç пулса.

Çĕн ĕмĕт, çĕнĕ кун, çĕн туйăмсем,
Сире кĕтетĕп эпĕ хăçанччен...
Кĕрхи тĕтре пек йывăр шухăшсем
Саланччăр сарă кантăк умĕнчен!

## ВАЛ ВАХАТРА — МЁН КАЛАН...

Вăл вăхăтра — мĕн калăн? — çамрăк пулнă:
Хыçалалла çавăрăнса пăхман,
Йăнăшсене курман та йышăнман,
Пĕр хăрамасăр çĕнĕ утăм тунă.

Паян асăрхануллă, шăп утатпăр —
Çул юппинче хăратпăр ӳкесрен.
Тен, çавăнпа теветкелрех ĕçрен
Сăлтав тупса сăпайлăн пăрăнатпăр.

Халь тăтăш-тăтăш асилме пуçлатпăр,
Шеллетпĕр иртсе кайнă савнăçа.
Вара иртейнĕ кунсенче пурнатпăр...
Çапла, тен, сулăнатпăр анăçа.

* * *

1

Хитрелĕх умĕнче — хисеплĕ парăм.
Хитре юратăва, чăн, тивĕç эс.
Кайран мĕн пулĕ? — шутласа тăмарăм:
Тĕл пултăм та халь уйрăлас килмест.

Сăвва эс лайăх рифма пек кĕретĕн,
Çемми кăна кăштах хĕсет чуна.
Тунсăхлама пĕлнишĕнех пире, тен,
Шăпа хăй парнелет çак ыр куна.

Парне хакне пăхмаççĕ. Кирлĕ маршăн
Çапла хыпса эп çунăп-и вара?
Алла вĕрентеймен саркайăк мар-ши
Çемçен чĕвĕлтетсе ларать умра...

Парр! вĕçсе кайăн та — текех кураймăп,
Чĕркем çинче сана тытса лараймăп.

2

Телейлĕ чух телей çинчен шутламăн:
Кирлех-ши ик хĕвел чечек валли?
Асталăх çеç çитмест — чунра халь манăн
Мĕн чухлĕ сасă юрă тумалли.

Анчах телей ку вăхăтлăх, пĕлетĕп,—
Сан чĕрӳнте эп пĕр куна кăна.
Симпыллă кĕреке сыв пултăр тетĕп,
Тепре хăйса килем-и хăнана?

Пĕрпеклĕх çук. Шутлавлă ман ăса та
Сар çутă тивнĕ — хăварман пайран.
Паян хама савакана ăсатăп,
Кама кĕтсе эп илĕп-ши кайран...

Парр! вĕçсе кайрăн та — тек кураймарăм,
Чĕркем çинче лартса савăнаймарăм.

3

Халь мĕншĕн ирĕк мар тахçан хам савнă
Пĕчченлĕхре? — Вăл маншăн халь инкек.
Иртсе кайсан ӳкет пуль çутă савнăç
Ура айне пĕр тĕссĕр тутăр пек.

Хĕвел анăçалла сулăннăçемĕн
Епле çак вăхăт васкама пуçлать.
Сана ăсатнă чух йĕрленнĕ çемĕ
Крещендо пек çӳлте, ак, хуçăлать.

Апла каллех — хавхалану пĕтет те —
Аманнă кăйкăр евĕр ӳкмелле?
Çухатнине ман тупмаллах, пĕлетĕп,
Асатнине кĕтсе ман илмелле.

Парр! вĕçсе кайрăн та текех килмерĕн,
Вĕçме сан хыççăн хамăн хал çитмерĕ.

4

Çул уçăлать утакансем валли çеç,
Савсах савма пĕлекене сăвап.
Çак тивĕçе пăхса телей валеçĕç,
Хитре сăнпа та курăн эс асап.

Çур килтĕн те кĕркуннепе ăсантăн,—
Апла çул май эс кĕтĕн ман пата?
Анчах та пурнăçа епле пулсан та
Çул майăн пурăнаймăн, тупата.

Тĕнче вăл аслă, енĕсем тăваттă,
Хăш еннелле çул тытăн-ши тата...
Пĕрех сана ӳксе эп тав тăватăп
Хал панăшăн çырма çак сонета.

Пĕр вĕçсе кайрăн та тек кураймарăм,
Тăраниччен сана юратаймарăм.

5

Тул çутăлнă чухне ĕмĕтленеççĕ,
Аса илме пуçлаççĕ каç енне.
Хăçан-ха вăл? — илемлĕ пĕчĕкçеççĕ
Аллусене чуптунăччĕ санне.

Сана эп шухăшра таçтах çитернӗ,
Тен, хăвăнтан хитре вăл, çутăрах?
Çапла, тен, Рафаэль хăех ӳкернӗ
Хӗр умӗнче вăйран кайса тăрать.

Юратăвăн хăйне йӗркийӗ унăн:
Тутли те пур, йӳççи те тем чухлех.
Тӗл пулнă чух ытла хаваслă чунăм
Хӗссе килет уйрăлаяс чухне.

Чӗркем çинче текех лармасть саркайăк,
Кам айăплă? Камах татса калайӗ...

## ЧЕЧЕКӖМСЕМ

Кивелнӗ сад. Анчах та питӗ лайăх
Ларса канмашкăн ун сулхăнӗнче.
Юратнă юррине юрлать пӗр кайăк
Тахçантанпах садри тӗм хушшинче.

Тӳр чунлă кайăк. Çӗнӗ сад чӗнсен те
Улăштармасть вӗреннӗ кӗтесе.
Çӗр çитмӗл çичӗ тӗслĕ чечексем те
Лараççӗ пек савнисене кӗтсе.

Утмăлтурат, кăвак çеçке, сар ейӗк,
Çумрах-çке шурă пурçăн — шур çеçке.
Е сăнаман-ши ун чухне сире эп,
Е çамрăклăхăм пулнă-ши кӗске?

Чечекӗмсем, саркайăк хӗпӗртейӗ
Куçран пăхса ларас пулсан сире.
Уç конвертсем вӗçсе çӳреççӗ тейӗн,
Сар лӗпӗшсем вӗçеççӗ вӗççӗрех.

Ах, чечексем, эсир асилтеретĕр
Чап-чакăр куçлă шукăль хĕрсене:
Çавăтăнса вăй картине кĕретĕр,
Юрлатăр лăпкăн çăлтăр юррине.

Ах, чечексем...Ун чух эп çамрăк каччă —
Пĕлнех-ши суйлама та юратма?
Анчах пĕри, пĕри вут хыптаратчĕ
Тин çеç вăраннă уçă чунăма.

Пĕрремĕш юрату, сӳнмен кăвар та
Сан пек суран тăваймĕ чĕрере.
Чуна ĕнтсе тăмха çапса хăвартăн,
Асаилӳ хăвартăн ĕмĕре.

Паян та ак кăвак чечек пĕлтерĕ
Сан куçусем çинчен пăшăлтатса.
Кунсем иртсен те ĕмĕр иртмĕ терĕм,
Анчах тăнлавăм пычĕ шуралсах.

Кăвак хуппи пек хăвăрт иртрĕ ĕмĕр,
Ыйтса та юлаймарăм телейне.
Кивелнĕ садăн чĕр çеçкийĕ евĕр
Çап-çамрăк туйăм юлчĕ чĕрене.

## ШУРĂ АКĂШ ЮРРИ

### I

Тĕл пулатпăр чунтан юратса пĕр-пĕрне,
Хурланса та çунса уйрăлатпăр.
Пĕрле чух телее те пайлатпăр пĕрле,
Пĕчченшерĕн — ӳксе тунсăхлатпăр.

Халиччен те çунса эп пĕтмен-ши вара?
Ман чунра халь янран пурнăç маршĕ
Чĕрене çунтарса, хавшатса хăваран
Марненбадăн элегийĕ мар-ши?..

Талисман пек таса пулса юлĕ яту,
Чуптуни ирĕлсе сисĕм пулĕ.
Вырăссем калашле, юлашки юрату
Шурă акăш юрри пулса юлĕ.

II

Лăпланса пурăнас тенĕ чух ман тĕле
Ак каллех ăшçунтармăш тухайрĕ:
Шурă акăш пулса вĕçсе килчĕ телей,
Шурă шухăш пулса вĕçсе кайрĕ.

Маларах, тен, вĕçсе килмеллеччĕ-ши ун,
Каярах, тен, вĕçсе каймаллаччĕ?.. —
Юратса пĕтермесĕр лăпланĕ-и чун
Унчченхи кăйкăр ĕмĕтлĕ каччăн?

Пурте вăхăтлăх канăçсăр çак тĕнчере:
Хура хуйăх та, сарă телей те.
Уйрăлу пуласса сиссе тăнă чĕре
Тĕлпулу пуласса та сисет, тен?

Кил, савни, ыталам, ачашлам эп сана —
Пĕр самантлăх телей те телей-тĕр...
Шурă шухăш-кичемлĕх вĕçсе кайсанах
Шурă акăш каллех вĕçсе килтĕр.

## ÇУЛСЕМ ÇАВӐРСА ТУХЧӐР САН ПАТНА

Те ир тухсан юратчӗ, те кайран,
Те каласан юратчӗ, те чӑтсан...
Çул хыççӑн çул тухать Урал таран,
Çул хыççӑн çул тухать çула татса.

Калас сӑмахӑм пурччӗ ман малтан,—
Калас теменнине каларӑм, тен,
Çула тухмаççӗ пурнӑç çӑмӑлтан,
Тухмаççӗ кӗрхи каç тӑван килтен.

Хыçа юлать пусарӑннӑ тӗкме,
Мӗлкийӗсем тараççӗ çутӑран.
Каллех, каллех çул юппинче тӑран,
Мана эс ӑсатан каллех кӗтме.

Эс панӑ шанчӑк пытӑр çул тытса:
Кунçулӑм тӗрлӗ кукӑрсем туса
Каллех çавӑрса тухтӑр сан патна.
...Кӗлтунӑ пек пӑшӑлтатап ятна.

## ТУПМАЛЛИ


Тăван кĕтес . . . . . . 3
Çĕнĕ кун . . . . . . 21
Чĕрĕ тĕвĕсем . . . . . . 36


---


*Для старшего школьного возраста*

**Николай Аверкиевич Исмуков**

**СТОРОНКА РОДНАЯ**

Стихи

На чувашском языке

Редактор П. Е. Эйзин
Художник В. А. Смирнов
Художественный редактор Э. М. Юрьев
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор А. К. Шашкина

ИБ 1647

Сдано в набор 18.06.85 Подписано в печать 23.07.85. НТ 35195. Формат 70×90 $^1/_{32}$. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 1,75. Усл. кр.-отт. 1,90. Уч.-изд. л. 1,71. Тираж 1500 экз. Заказ № 2598. Изд. № 85. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

10 пус

Николай Исмуков



Николай Исмуков 1942 çулта Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче çуралнă. Свердловскри патшалăх университетне пĕтернĕ. Тĕрлĕ вăхăтсенче Аслă Чеменри, Ишлĕ Шетмĕри шкулсенче тата Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕнче учительте ĕçленĕ. Мускавра аспирантура пĕтернĕ. Философи наукисен кандидачĕ. И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен пединститутра доцент пулса ĕçлет. Икĕ уйрăм кĕнекепе çирĕме яхăн наукăлла статьясен авторĕ.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ